**Утă уйăхĕн 6-17-мĕшĕсенче Хусанта Пĕтĕм тĕнчери XXVII Универсиада иртнĕ. Çапла Раççейри чи пысăк стадионсенчен пĕринче – „Хусан-Аренăра” – Студентсен ваййисен çулăмĕ савăнăçлă ларутăрура сӳнчĕ. Çак тапхăрта 351 медаль выляттарнă, вĕсенчен 292-шне пирĕн çĕр-шыв спортсменĕсем çĕнсе илнĕ: 155 „ылтăн”, 75 „кĕмĕл” тата 62 „бронза”. Çавăнпах Раççей команди пĕрремĕш вырăна тухнă.**

**Тутар Республикин тĕп хулинче пулнă Универсиада çӳллĕ шайра иртнĕ. Кунта, паллах, волонтерсен тӳпи те пур. XXVII Универсиадăра Раççейри регионсенчен, ют çĕршывсенчен 20 пин çамрăк волонтер пулма кăмăл тунă. Чăваш Республикинчен 193 яш-хĕр кайнă.**

Утă уйăхĕн 19-мĕшĕнче ЧР Вĕренӳ институчĕ умĕнче пирĕн волонтерсене кĕтсе илчĕç. Çамрăксене ЧР вĕренӳпе çамрăксен политикин министрĕн çумĕ Сергей Кудряшов, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн ректорĕн çумĕ Олег Викторов саламларĕç, тав турĕç. Чăваш Республикинчи волонтерсене хатĕрлекен „Хусан-2013” центрăн координаторĕ Софья Белова сăмах илчĕ:

– Хусанта иртнĕ Универсиада ĕмĕрлĕхех асра юлĕ. Еплерех вăрăм çула утса тухрăмăр эпир: хутшăнма ыйту çырнинчен пуçласа „Хусан-Арена” стадионта пĕтĕм халăх умĕнче тăриччен.

Софья Сергей Кудряшова волонтерсен апатне парнелерĕ. Ланч-бокс – кăнтăрла çимелли порци. Апат-çимĕç те, пурăнмалли кĕтес те тӳлевсĕр пулнă. Хулара çӳресе те тăкакланман вĕсем.

– Кун пек шайра иртнĕ мероприятире пĕрремĕш хут пултăм, - савăнăçне пытараймарĕ ЧПУн медицина факультечĕн 3-мĕш курс студентки Елена Маркизова. – Эпĕ волейбол лапамĕнче ĕçлерĕм. Çыпсемпе паллашрăм. Япони командинчи çамрăксемпе калаçма май пулчĕ. Пĕр-пĕрне асăнмалăх парнесем патăмăр.Çыхăнăва татмасса шанатăп. Пурăнмалли условисем чаплăччĕ. Пĕр пӳлĕмре иккĕн пурăнтăмăр. Ирхине тата каçхине вĕри апат çитеретчĕç. Хусан палламалла мар улшăннă. Пур çĕрте те симĕс курăк, чечек... Европăри хулапа та танлаштарма пулать ăна.

Универсиада хупăннă вăхăтра волонтерсем „Хусан-Аренăн” варринчетăнă. Тепĕр кунхине вĕсем валли ташă каçĕ йĕркеленĕ. Çамрăксене Сергей Лазарев хăйĕн юррисемпе пĕр сехет савăнтарнă.

**Ирина КОШКИНА. Çамрăксен хаçачĕ. 2013.26 июля.**